Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчен тухать

19 (7552) № * Эрне кун, 2008 çулхи мартăн (пуш) 7-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Республикăра

### Стратеги проектне сӳтсе яврĕç

Юн кун Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров ертсе пынипе «Чăваш Республикинче вĕрентĕве 2040 çулччен аталантармалли стратеги» проектне сӳтсе явнă. Эксперт комиссийĕн анлă ларăвне влаç органĕсен, вĕрентӳ тытăмĕн тата бизнес представителĕсем хутшăннă, пысăк пĕлтерĕшлĕ документ пирки хăйсен шухăшĕсене пĕлтернĕ, сĕнӳсем панă. Ларăва ЧР влаç органĕсен официаллă порталĕнче он-лайн режимпа трансляцилени республикăра тата ун тулашĕнче пурăнакансене те Стратеги проекчĕ пирки хăйсен сĕнĕвĕсене пĕлтерме май панă.

## РФ Президенчĕн суйлавĕ

### Муркашсем – Д. Медведевшăн

Территори суйлав комиссийĕ пĕлтернĕ тăрăх, 2008 çулхи мартăн 2-мĕшĕнче РФ Президентне суйлассипе сасăлав ирттерме 25253 суйлавçăна списока кĕртнĕ, вĕсенчен 21785 суйлавçă (86,27 процент) сасăлава хутшăннă. Кандидатсем А.В. Богданов 0,86 процент, В.В. Жириновский 8,93 процент, Г.А. Зюганов 22,52 процент, Д.А. Медведев 66,02 процент суйлавçăсен сассисене пухнă. Раççей Президентне суйлассипе сасăлав суйлав участокĕсенче мĕнле иртни пирки таблица 5-мĕш страницăра пичетленет.

## Çемье çулталăкĕ

### Сывлăхлă çитĕн, Даниил!

Мартăн 3-мĕшĕнче ЗАГС пайĕнче Юнкă ял тăрăхĕнчи Пĕрремĕш Май выççăлккинчи Ольга Петровнапа Дмитрий Петрович Никитинсем хăйсен пепкине ят хунине регистрацилерĕç. Даниил çемьере пĕрремĕш ача. Кăсăкли вара кунта акă мĕн. Даниил 2008 çулхи февралĕн 29-мĕшĕнче кун çути курнă. Апла пулсан çуралнă кунне те унăнне 4 çулта пĕр хут кăна уявлама тивĕ.

Кун пирки телейпе савăнăçне пытараймасăр Дмитрий Петрович çапла каларĕ: «Ку вăл çемьешĕн проблема мар. Мăшăр мана пысăк парне туса пачĕ – ывăл парнелерĕ. Вăл сывă ӳстĕр кăна».



*Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче пултаруллă та хастар ĕçченсем сахал мар. Хуçалăх юлашки вăхăтра аталану çулĕпе малаллах утăмлани вара кашни ĕçченĕн тăрăшулăхĕпе çыхăннă.*

*Сăн ӳкерчĕкре эсир Ваçкассинчи сĕт-çу ферминче вăй хуракан Светлана Леонидовна Федорована, Галина Григорьевна Федорована тата Рената Аркадьевна Терентьевана куратăр. Дояркăсем иртнĕ çул хăйсене шанса панă ушкăнсенчи кашни ĕне пуçне вăтамран 4500-шер килограмм ытла сĕт суса илнĕ. Кăçал вара хастар ĕçченсем татах тăрăшуллăрах ĕçлес ĕмĕтлĕ.*

*В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

## ЧР Президенчĕн стипендиачĕсем



*Муркаш тăрăхĕнче пултаруллă та хастар çамрăксем нумай. Вĕсенчен пĕри – Надежда Владиславовна Иванова. Кăçал вăл Чăваш Республикин Президенчĕн стипендине илме тивĕçрĕ. Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕнче инструктор-методист пулса вăй хурать. Пĕр спорт мероприятийĕ те çак çамрăк хĕрсĕр иртмест пуль.*

*Яланах савăк кăмăллă Надежда Муркаш ял тăрăхĕн çамрăксен канашĕн председателĕ те. «Пĕр ĕç теприне чăрмав кӳмест, малалла вăй парса кăна пырать, ума лартнă тĕллевсене пурнăçа кĕртме пулăшать», – тет çамрăк специалист.*

## Ыран – Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ

**ЮРАТНĂ ХĔРАРĂМСЕМ!**

Сире Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!

Сирĕн хитрелĕхĕрпе кăмăлăр, ăш пиллĕхĕрпе ачашлăхăр чăннипех те пирĕн пурнăçа туллирех те пуянрах тăваççĕ. Сире пӳрнĕ юратăвăн пысăк вăйĕ тĕнчене çĕнетсе улăштарать, çутăлăхпа килĕшӳлĕх, çутă сăнсемпе çурхи чĕрĕлĕх кӳрет. Эсир парнелекен чун ăшши тата тимлĕх йывăр вăхăтра хӳтĕлеççĕ, ĕненӳпе шанчăк туйăмне çирĕплетеççĕ.

Хĕрарăмсене пуласлăх аталанăвне çут çанталăках пӳрнĕ. Професси тата общество ĕçĕ-хĕлĕн пур сферисенче те эсир ĕçлетĕр, палăрăмлă çитĕнӳсем тăватăр. Çемьене çирĕплетессипе тата ачасене воспитани парассипе, кил ăшшине тытса тăрассипе, ăс-хакăл тата нравственность хаклăхĕсене упраса хăварассипе эсир хывакан тӳпе питех те хаклă.

Хаклă аннесемпе асаннесем, мăшăрсемпе хĕрсем, йăмăксемпе хĕр-юлташсем, таса чунлă пулнишĕн тата чăтăмлăхăршăн, ăс-тăнăрпа ăнланма пĕлнишĕн сире чăннипех тав сăмахĕ калама тивĕç. Пĕтĕм чунтан сире çирĕп сывлăх, нихçан сӳнми вăй-хал, илемлĕхпе ытарайманлăх сунатăп! Сирĕнтен тата сирĕн çывăх çыннăрсенчен телейпе юрату нихăçан та пăрăнса ан иртчĕр.

**Н.В. ФЕДОРОВ, Чăваш Республикин Президенчĕ.**

**ХИСЕПЛĔ ТЕ ХАКЛĂ ХĔРАРĂМСЕМ!**

Сире çывхарса килекен Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çуркунне пĕтĕм тĕнче чĕрĕлнĕ вăхăтпа пĕр килет çак уяв. Çĕр çинчи мĕн пур ырлăхпа илем, хисеплĕ аннесемпе асаннесем, юратнă мăшăрсем, аппасемпе йăмăксем, йăлтах сирĕнпе çыхăннă. Эсир ачăрсене пурнăç парнелетĕр, вĕсене тĕрĕс воспитани парассишĕн ырми-канми тимлетĕр. Сирĕн чун-чĕрĕр вĕçĕ-хĕррисĕр ырă кăмăлпа тулнă. Çывăх çыннăрсен хуйхисуйхине хăвăр витĕр кăларса вĕсене йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшатăр.

Хисеплĕ те юратнă хĕрарăмсем, сирĕн иксĕлми çепĕçлĕхĕрпе ачашлăхăр пире вăй-хал парать. Эсир çемье, кил-çурт ăшши пулса тăратăр. Çав вăхăтрах нимĕнпе танлаштарма çук иксĕлми вăй-хал тапса тăрать сирĕнте. Кирек хăш отрасльте тăрăшсан та ĕçченлĕхпе, пултарулăхпа тата тăрăшулăхпа палăрса тăратăр, ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тăватăр. Район аталанăвĕшĕн вăй хуратăр. Тавах сире çакăншăн.

Пĕтĕм чунтан сире çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçу, телей сунатăп. Сирĕн сăн-питĕрте яланах йăл кулă çиçтĕр, ăна сӳнтерекен пĕр сăлтав та ан пултăр. Ачăрсем сире савăнăç çеç кӳччĕр, вĕсен пурнăç çулĕ телейлĕ пултăр. 2008 çул – Çемье тата Ырă ĕçсен çулталăкĕ.

Çемйĕрсенче кăçал çеç мар, яланах килĕшӳпе тату пурнăç хуçаланччăр, Сирĕн ырă кăмăлтан тунă ырă ĕçĕрсем хăвăра та ырлăх кӳччĕр.

**Ю.А. ИВАНОВ, район пуçлăхĕ.**

**МИЛЫЕ ЖЕНЩИНЫ!**

Сердечно поздравляю вас с одним из самых прекрасных и светлых праздников года – с Международным женским днем 8 Марта.

Наши женщины наравне с сильным полом – мужчинами работают во всех отраслях народного хозяйства, многие из них являются передовиками и новаторами производства, примером для подражания других, успешно занимаются своим делом. Они также принимают активное участие в управлении делами государства и общественной жизни страны.

Особая роль женщине принадлежит в создании крепкой семьи, воспитании достойных сынов и дочерей для нашей любимой Родины.

Желаю вам дальнейших успехов в работе, здоровья, счастья, любви, красоты и нежности.

**Н.М. БУДАРИН, депутат Государственной Думы, Герой России, летчик-космонавт.**

***ОАО «Моргаушский кирпичный завод» поздравляет всех женщин с Международным женским днем 8 Марта! Желает здоровья, счастья и любви.***

## Хĕрарăмсен уявĕ умĕн

# *Пурнăç илемĕ – сирĕнте*

***Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ çывхарса килет. Пурте çак кунсенче хăйсен чи çывăх çыннисене саламлаççĕ. Хĕрарăмсем ача амăшĕн тивĕçĕсене пурнăçланипе пĕрлех ĕçре те çитĕнӳсем тăваççĕ, обществăлла ĕçе хутшăнма та вăхăт тупаççĕ. Вĕсен маттурлăхĕпе пултарулăхĕ çинчен уяв умĕн каласмасăр тăма та май çук. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – культурăпа архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи, районти хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи А.Е. АНДРЕЕВА акă мĕн шутлать кун пирки:***

– Çут çанталăк хĕрарăма чи таса та пархатарлă тивĕç панă: вĕсем – ача амăшĕсем. Вĕсем хăйсем кун-çул панă ывăл-хĕрĕсене ырă-сывă çитĕнтерсе пурнăç çулĕ çине кăларассишĕн тăрăшаççĕ. Паян районта 18 çулчченхи ача пур çемьесем пурĕ 4277 (7028 ача çитĕнет). Вĕсенчен 454-шĕ – нумай ачаллă çемьесем. Вĕсенче 1480 ача ӳсет. Амăшĕшĕн ачи пĕчĕк чухне те, ӳссе çитĕнсе хăйсем çемьеллĕ пулсан та вĕсем ачасемех юлаççĕ. Амăшĕн чĕринче пурин валли те çитет юратупа ырă кăмăл.

Пирĕн çĕршывра ача пур çемьесене пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Юлашки çулсенче пулса иртнĕ ырă улшăнусем çакна çирĕплетсе параççĕ те: ача пособийĕсен виçисем ӳсрĕç, амăшĕн капиталне туса хучĕç тата ытти те. Иртнĕ çул Ача çулталăкĕ пулчĕ, кăçал вара – Çемье тата Ырă ĕçсен çулталăкĕ. Ку пире, хĕрарăмсене, хамăр тивĕç çине татах та яваплăрах пăхма хистет. Мĕншĕн тесен хĕрарăмран нумай килет çемьере ларутăру мĕнле пуласси. Ахальтен каламаççĕ вĕт хĕрарăм çемье тыткăчи, кил ăшши тесе.

Кунта манăн ют ачасене усрама илнĕ çемьесене уйрăммăн тав сăмахĕ калас килет. Паян пирĕн районта 6 çемьере 7 ачана пурăнма илнĕ. 14 ачана усрава илнĕ. Çавăн пекех 62 çемье 80 ачана опекăна илнĕ. Чĕререн тав вĕсене çак пархатарлă утăмшăн.

**– Алевтина Евстафьевна, паян ача амăшĕсем ĕçре пысăк ӳсĕмсем тăваççĕ. Кун пирки мĕн шутлатăр?**

– Чăннипех те, паян хĕрарăмсем ĕçлемен вырăн çук та пулĕ. Кашни отрасльтех вăй хураççĕ вĕсем. Вĕсен çитĕнĕвĕсем те куç умĕнчех. Акă «Герой» хуçалăх доярки О.В. Петрова тата А.В. Филиппова, С.Л. Яковлева (Суворов яч. хис.) сысна пăхакансем, Н.А. Захарова, С.В. Вершкова («Оринино») мăйракаллă шултра выльăх пăхакансем, Муркашри кирпĕч заводĕнче ĕçлекен И.В. Зайцевапа Э.Б. Павлова тата ыттисем ырă сăмаха тивĕç. Кун пек маттур ĕçченсем кашни сферăрах, кашни предприятипе организацинчех пур.

Яваплăха хытă туйса вăй хунăран хĕрарăмсене коллектива ертсе пыма шанаççĕ. Хĕрарăм-ертӳçĕсенчен Ярапайкассинчи пĕтĕмĕшле практива врачĕн офисĕн заведующине В.Н. Любимована, Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне Л.Г. Ковалевана, Нискасси шкул директорне А.А. Калинкинана, район сучĕн председательне Э.Л. Тарасована, Мăн Сĕнтĕр райпо канашĕн председательне Л.П. Майкована, «Визит» магазин директорне Л.В. Николаевана ниепле те ырăпа асăнмасăр çук. Вĕсем ертсе пыракан коллективсем чăннипех те ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ.

**– Хĕрарăмсен канашне ертсе пынă май хĕрарăмсен обществăлла ĕçри вырăнне мĕнле хак пană пулăттăр?**

– Чун-чĕре ăшши пурин валли те çитет – акă мĕн калас килет вĕсем пирки. Килте те пĕтĕм ĕçе тума ĕлкĕреççĕ вĕсем, ĕçре ĕшентĕм тесе те лармаççĕ, ялти пурнăçа илем кӳрес тесе хăйсенчен мĕн килнине тума тăрăшаççĕ. Вырăнсенче мĕн тĕрлĕ мероприяти ирттермеççĕ пулĕ. Хĕрарăмсем пултарулăх ушкăнĕсене те çӳреççĕ, тĕрлĕ куравсем йĕркелеççĕ, уявсенче те пуçаруллисем – хĕрарăмсем. Ку çеç-и? Ялта кам мĕнле пурăнни куç умĕнчех. Хĕрарăмсен канашĕсен ертӳçисен çемьесемпе ĕçлекен комисси пуçлăхĕсемпе пĕрле ăнăççăр çемьесемпе те ĕçлеме тивет. Çынпа пĕр чĕлхе тупма пĕлни те кирлĕ кунта. Ку тĕлĕшпе манăн Ярословка тата Чуманкасси ял тăрăхĕсенчи хĕрарăмсен канашĕсен ертӳçисене Л.Н. Хозикована, З.И. Иванована тата ыттисене уйрăмах ырăпа палăртса хăварас килет.

Пĕр-пĕрне лайăх пĕлекен çыннăн сĕнĕвĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ-çке. Паян вара пăшăрхантаракан ыйтусем çук мар. Хĕрарăмсенчен те эрех енне туртăнакансем çук мар. Хĕрарăмсен канашĕсен ку енĕпе тата та çине тăрарах ĕçлесен аван пулмалла. Кашни амăшĕ хăйĕн ачишĕн, унăн пуласлăхĕшĕн яваплине туйса тăтăр.

Сăмаха вĕçленĕ май манăн аннесемпе асаннесен ячĕпе уйрăмах тав сăмахĕ калас килет. Вĕсем пире çакăн пек мирлĕ пурнăç парнеленĕ. Вĕсен паттăрлăхĕпе чăтăмлăхĕнчен эпир яланах вĕренсе пыратпăр, вĕсен умĕнче çĕре çити пуç таятпăр. Кăçал Çемье тата Ырă ĕçсен çулталăкĕнче пирĕн хамăрăн çемьесем çирĕп пулччăр тесе ытларах тăрăшасчĕ. Ырă ĕçсем тума ӳркенес марччĕ: хамăр çемьешĕн те, пĕр ялта пурăнакансемшĕн те.

Пурне те уяв ячĕпе саламлатăп, ырлăх-сывлăх сунатăп. Кашни çемьерех телей йăлйăл çиçтĕр, ĕмĕтĕрсем çитсе пыччăр.

**– Тавах, Алевтина Евстафьевна, калаçушăн.**

**Л.ПАВЛОВА калаçнă.**

## Юбилей

### Саламлатпăр



Анаткас Апаш ялĕнче пурăнакан çывăх тăванăмăра – **Елизавета Федоровна БАРМИНАНА** мартăн 8-чи сумлă юбилей ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Иксĕлми вăй-хăват, çирĕп сывлăх, телей, вăрăм ĕмĕр сунтапăр.

Нуши-тертне пайтах эс куртăн,  
Çамрăклах мăшăрунтан эс юлтăн,  
Çапах та эс пуçна усмарăн  
Виçĕ ачуна çитĕнтерсе эс çын турăн.

Ачусен, мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр.

**Салампа Федоровсен, Соколовсен çейисем.**

Хаклă çыннăмăра – юратнă мăшăрăма, ырă кăмăллă аннене, йăваш сасăллă кукамая, хисеплĕ тăвана – Çĕньял Очăкасси ялĕнче пурăнакан **Клавдия Сергеевна БЛИНОВАНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн хисеплесе ăшшăн саламлатпăр. Эсĕ пурри – телей! Сар хĕвел пайăркине сапаласа çут тĕнчене епле ăшăтать, эсĕ те, хаклă çыннăм, хăвăн ăшă куллупа, çепĕç сассупа пирĕн чунăма йăпататăн, пире малашнехи пурнăçра хавхалантарса вăйхал парса пыратăн. Пирĕн сана манас марччĕ, кун-çулна упрасчĕ. Хамăрăн ырă ĕçсемпе савăнтарасчĕ. Сана эпир çирĕп сывлăх, тăнăç пурнăç, канлĕ ватлăх сунатпăр.



Эс пурăн ăмăрт кайăкла,  
Çитсемччĕ чыслăн çĕр çула.  
Пăхсамччĕ эс шав малалла  
Ачусен, мăнукусен ырлăхне курмалла.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕсемпе кинĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем, кӳршисем.**